27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ОКТЯБРЬ
14
ШАМАТКУН
203(6698) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне МАЛИНОВСКИЕ

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем паян, октябрĕн 12-мĕшĕнче, утлă çарпа танксен соединенийĕсен тăшмана çавăрса илмелли ăста маневр тунипе пула, Трансильванири администрацин хуçалăхăн пысăк центрĕ, çул узелĕ пулса тăракан ОРАДЕА-МАРЕ (ГРОССВАРДЕЙН) хулине туртса илнĕ.

ОРАДЕА-МАРЕ хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче ПЛИЕВ генерал-лейтенантăн, ГОЛОВСКИЙ генерал-майорăн, РЕВА полковникăн, ДЕМЧУК полковникăн Кубань казакĕсен кавалеристĕсем; танковăй çарсен генерал-майорĕн КАТКОВАН, МАРШЕВ полковникăн, ЖУКОВ полковникăн, КАПИЕНКО полковникăн танкистĕсем; СЕМЕНОВ генерал-майорăн, ГОРОБЕЦ полковникăн çарĕсем; ФЕЛЬДМАН полковникăн, ТИХОМИРОВ полковникăн, МАРЧЕНКО полковникăн артиллеристĕсем; ПОЛЕТАЕВ подполковникăн, КОВАЛЕВ подполковникăн, ГУСЕВ майорăн саперĕсем; ЧЕПЕЛЕВ майорăн, ЯЦЕНКО подполковникăн, КАРПОВ полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ОРАДЕА-МАРЕ хулине туртса илессишĕн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, октябрĕн 12-мĕшĕнче, 22 сехетре, пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм тăватă хут пĕр харăс персе, УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ОРАДЕА-МАРЕ хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, ОРАДЕА-МАРЕ хулине ирĕке кăларассишĕн çапăçнă çĕртре пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи октябрĕн 12-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне МАСЛЕННИКОВА
Арми генералне ЕРЕМЕНКĂНА

БАЛТИКА ТĂРАХĔНЧИ 3-мĕш фронт çарĕсем, БАЛТИКА ТĂРАХĔНЧИ 2-мĕш фронт çарĕсем тĕрĕслĕхпе пулăшнипе, ăнăçлă наступление вăйлатса пырса, паян, октябрĕн 13-мĕшĕнче, Совет Латвийĕн столицине РИГА хулине — питех те пысăк тинĕс портне тата Балтика тинĕсĕ çинчи нимĕçсен оборонин пĕлтерĕшлĕ узелне — штурмласа туртса илнĕ.

РИГА хулине туртса илессишĕн çапăçнă чухне РОМАНОВСКИЙ генерал-лейтенантăн, БЕЛОВ генерал-полковникăн, ЗАХВАТАЕВ генерал-лейтенантăн, РОГИНСКИЙ генерал-лейтенантăн, КАЗАНКОВ генерал-майорăн, КОРОТКОВ генерал-лейтенантăн, РОЖДЕСТВЕНСКИЙ генерал-майорăн, БРАНТКАЛН генерал-майорăн латышсен корпусĕ, НИКИШИН генерал-майорăн, ВЕРЖБИЦКИЙ генерал-майорăн, СИЯЗОВ генерал-майорăн, ХАЛЮЗИН генерал-лейтенантăн, БУНЬКОВ генерал-майорăн, МАРТЫНЧУК генерал-майорăн, АБАШКИН полковникăн, ХОРУЖЕНКО генерал-лейтенантăн, СТУЧЕНКО генерал-майорăн, КУЛЕШОВ генерал-майорăн, ВАХРАМЕЕВ генерал-майорăн, ЛЯСКИН генерал-майорăн, ПОЛЯКОВ генерал-майорăн, РОДИОНОВ генерал-майорăн, НИКОНОРОВ полковникăн, ТЭСЛЯ полковникăн, МИРОНЕНКО полковникăн, ПАРШУКОВ полковникăн, СИМОНОВ полковникăн, ГОРОДЕЦКИЙ полковникăн, ДУДОРОВ полковникăн, КУЧЕНЕВ полковникăн, МАКАРОВ генерал-майорăн, БАСТЕЕВ полковникăн, АНДОНЬЕВ полковникăн, ГОРИШНИЙ генерал-майорăн, ШАФАРЕНКО генерал-майорăн, КОЗИН генерал-майорăн, БУРЛАКИН генерал-майорăн, РЕБРИКОВ генерал-майорăн, МОРЕЦКИЙ полковникăн, ЛОМОВ полковникăн, МОРОЗОВ полковникăн, ЛАЗАРЕВ полковникăн, ИСАЕВ генерал-майорăн, КОЛОБУТИН полковникăн, АНДРЮЩЕНКО генерал-майорăн, ЧЕРНИЧЕНКО полковникăн, ГРИБОВ генерал-майорăн, ГУСАРОВ генерал-майорăн, КАЛНИН генерал-майорăн, КОВАЛЕНКО полковникăн, КАЛНИН полковникăн, КОЗЛОВ полковникăн, ТИМОЩЕНКО полковникăн, ПОРФИРЬЕВ полковникăн, СТАРУХИН полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн КРАСНОПЕВЦЕВАН, артиллери генерал-полковникĕн НИЧИКОВАН, артиллери генерал-майорĕн ОВЧИННИКОВАН, артиллери генерал-майорĕн ЕГОРОВАН, артиллери генерал-майорĕн ЛЕВИНАН, ШЛЕПИН полковникăн, артиллери генерал-майорĕн РОГОЗИНАН, артиллери генерал-майорĕн ХАРЛАМОВАН, артиллери генерал-майорĕн КУЛИКОВАН, ПОНОМАРЕНКО полковникăн, ПУМПУР полковникăн, ИВАНОВ полковникăн, КОЛОСОВ полковникăн, ДЕГТЯРЕНКО полковникăн, КАМОРНЫЙ полковникăн, ЕГОРОВ подполковникăн, ШКУРИХИН полковникăн, ИВАЩЕНКО полковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-майорĕн КОЛОСОВАН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ШАПОШНИКОВАН, танковăй çарсен генерал-майорĕн САХНОН, ИВАНОВИЧ полковникăн, ОВСЯННИКОВ полковникăн, МЖАЧИХ подполковникăн, ФЕДОРОВ подполковникăн, ХОМЕНКО подполковникăн, КИСЕЛЕВ подполковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн ЖУРАВЛЕВАН, авиаци генерал-полковникĕн НАУМЕНКĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ЮХАНОВАН, авиаци генерал-лейтенанчĕн НЕСТЕРЦЕВАН, авиаци генерал-лейтенанчĕн БУЯНСКИН, авиаци генерал-майорĕн ДАНИЛОВАН, авиаци генерал-майорĕн ЛЕБЕДЕВАН, ДОДОНОВ полковникăн, АНДРЕЕВ полковникăн, ПОДМОГИЛЬНЫЙ подполковникăн, ПОЛУШКО полковникăн, КУЛИШ подполковникăн, ЗОЛОЧЕВСКИЙ подполковникăн, ЯКОВЛЕВ майорăн, РАССКАЗОВ подполковникăн, НЕУЙМИН капитанăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн КИРЧЕВСКИН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ПИЛИПЕЦĂН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ЧЕПУРОВАН, СЕРГЕЕВ полковникăн, ПОШЕХОНЦЕВ полковникăн, РОГОВИЧ полковникăн, ПАВШУК полковникăн, МАРЧАН полковникăн, СОБОЛЕВ подполковникăн, АНГЛИЧАНОВ подполковникăн, КАРПУНЕНКО майорăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн СИНЕЛЬНИКОВАН, çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн, ПАНИНĂН, КОРПЛЯКОВ полковникăн, СОКОЛОВ полковникăн, ДРОБКИС подполковникăн, БРАНДЕЛИС подполковникăн, МЕКЕНЗИН подполковникăн, КОСОБОКОВ майорăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, РИГА хулине туртса илессишĕн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «РИЖСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, октябрĕн 13-мĕшĕнче, 23 сехетре хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, виççĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм тăватă хут пĕр харăс персе, БАЛТИКА ТĂРАХĔНЧИ 3-мĕш тата 2-мĕш фронтсен паттăр çарĕсене, вăл шутрах БРАНТКАЛН генерал-майорăн латышсен корпусне, Совет Латвийĕн столицине РИГА хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, РИГА хулине ирĕке кăларассишĕн çапăçнă çĕртре пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи октябрĕн 13-мĕшĕ.

„Тихий океан" ятлă документлă фильм ўкереççĕ

Документлă фильмсен центральнăй студийĕнче ĕçлекен работниксен пĕр ушкăнĕ «Тихий океан» ятлă документлă çĕнĕ фильм ўкерме пуçланă. Çав фильмра Совет Союзĕн инçетри хĕвехтухăçĕнчи тĕрлĕ йышши пуянлăхĕсене, Хабаровск крайĕпе Приморски крайри ĕççынниксем фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан Аслă Отечественнăй вăрçа хутшăннине кăтартаççĕ.

Çав ушкăн Анат Амур çинче кета ятлă пулă тытнине ўкерсе илнĕ ĕнтĕ. Халĕ вăл Командор утравĕсене, тинĕс котикĕсем выртакан вырăнсене ўкерет. (ТАСС).

Ĕççынни депутачĕсен райсовечĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, тырпул пухса кĕртес ĕçре тухăçлăн тата лайăх ĕçлевĕшĕн ял-хуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

Сĕнтĕр районĕ тăрăх

76. «Ядро» колхоз (председателĕ Сидуков юлташ). Колхоз тырăсене вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр вырса пĕтерсе капана хывнă, кĕрхи тырăсене августăн 21-мĕшĕнче акса пĕтернĕ, государствăна тырă срокчен парса татнă тата 1945 çулшăн аванс шучĕпе 840 пăт тырă парса хунă.

Етĕрне районĕ тăрăх

77. «Парижская Коммуна» колхоз (председателĕ Зыбин юлташ, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Николаева юлташ). Ку колхоз тырăсене вăхăтра вырса пĕтерсе капана хывнă, кĕрхи тырăсене чи лайăх вăхăтра акса хăварнă, государствăна тырă парса татнă.

78. «Комсомол» колхоз (председателĕ Краснов юлташ, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Кузьмина юлташ). Ку колхоз тырăсене вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр вырса пуçтарнă, кĕрхи тырăсене чи лайăх вăхăтра акса хăварнă, государствăна тырă парса татнă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ОКТЯБРĔН 11-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Октябрĕн 11-мĕшĕнче САРЕМА (ЭЗЕЛЬ) утравĕ çинче пирĕн çарсем çав утравăн кăнтăр хĕрринчи УНГРУ тата ИМАРА ятлă халăх пурăнакан пунктсене тытса илнĕ. Çавăнпа пĕр вăхăтрах пирĕн çарсем ВИЛЬСАНДИ-ЛАИД тата АБРУКА-САР утравĕсене йышăннă.

КЛАЙПЕДА (МЕМЕЛЬ) хулинчен çурçĕртерехре тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем, наступлени туса пырса, халăх пурăнакан 100 пункта ытла йышăннă, çав шутра — ПИКЕЛЯИ, СКУОДАС, ДУНИКА, СИКШНИ, РУЦАВА, НИДАСЦИЭМС, МОНЧИШКИ, КЛЮОНЕЛИ, ЯКУБОВО, ГРИБЖАНЕ, МЕДСЕДЫ, ШУПОРЫ, ВИЛКУКОМИНЕ, СУГИНТЫ, ЗАЛТРЫШКИ, ГРЕИЧИ ятлă пысăк ялсем.

ШАКЯЙ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 50 пункта ытла йышăннă, çав шутра — ГЕЛЬГУДЫШКИ, КРУШОНЫ, КАИМЕЛЕ, ЛИМАНТЫ, НАРТЫ, ПЛИОРИШЕ, ПОНОВЕ ятлă пысăк ялсем.

Çурçĕр Трансильванире пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 70 пункта ытла йышăннă, çав шутра — РАДНАБОРБЕРЕК, ПАРВА, МУРЕШЕНИ-БЫРГЕЛУИ, КАЛИБИЦА, РОМАН-БУДАК, АРДАНЬ, НАДЬ-ШАИО, САС-ПЕНТЕК, ТЕКЕ, СТУЛИНЫ, ЖИШУЯ, ТУШОН, БЕРКЕНЬЕШ, СУАТУ, КОЖОКНА, АЛАХИДА ятлă пысăк ялсем тата ПАРВА, МЕГУРА, МУРЕШЕНИ-БЫРГЭЛУИ, ТЕКЕ, СЭРМЭШЕЛ, АПАХИДА ятлă чугун çул станцийĕсем.

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, ăнăçлă наступление вăйлатса пырса, октябрĕн 11-мĕшĕнче Трансильвани столицине КЛУЖ хулине тытса илнĕ. Çавăнпа пĕр вăхăтрах фронт çарĕсем, ТИССА шывĕ урлă каçса кайса, Венгрин хуçалăхпа политика тата администраци тĕлĕшĕнчен пысăк центрĕ пулса тăракан СЕГЕД хулине тытса илнĕ.

Югослави çĕрĕнче НИШ хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем, Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн чаçĕсемпе пĕрле кĕрешсе, КНЯЖЕВЕЦ хулипе чугун çул станцине тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çўренĕ тата темиçе пунктра тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Октябрĕн 10-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 145 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 62 самолетне персе ўкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ЛЕПАЯ (ЛИБАВА) ПОРТНЕ, РИГА ПОРТНЕ ТАТА НИМĔÇСЕН ТИЛЬЗИТ ХУЛИНЕ ТАПАННИ

Октябрĕн 11-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци нимĕçсен Лепая (Либава) портĕнчи тата Рига портĕнчи транспорчĕсем çине каллех бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе пула, икĕ портра та вăйлă пушарсем тухнă, пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

Нимĕçсен Тильзит хулине тапăннă вăхăтра пирĕн летчиксем çав хулан çурçĕр-хĕвелтухăç пайĕнче, чугун çул станцийĕнче тата Неман шывĕ урлă хывнă кĕперсем патĕнче тăшман çарĕсемпе автотранспорчĕ пухăнса тăнине асăрханă. Çав районсем çине бомбăсем пăрахса, нимĕç çарĕсене çухатусем тўстернĕ.

ОКТЯБРĔН 12-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Октябрĕн 12-мĕшĕнче пирĕн çарсем РИГА хули енче малалла тапăнса пынă, ЛАНГЕЦИЕМС, КАЛНГАЛАСЦИЕМС, ЯУНЦИЕМС, ЭЙЛЕНБУРГА, ЮГЛАСМУЙЖА (РИГА хулинчен 9 километр хĕвелтухăçнерехре), САВЕЛИ, СВАЛКАНИ, ПРИЕДЗ, ТЕСТЭРЦИЕМС, ВИЛЬЦИНИ, НАРКЕВИЧИ ятлă ялсене тата ЛАНГЕЦИЕМС, БАЛТЭЗЕРС, САУРЕШИ, САЛАСПИЛС ятлă чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ.

КЛАЙПЕДА (МЕМЕЛЬ) хулинчен çурçĕртерехре тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 50 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — ОЗОЛМЕЖИ, МИЭМИС, ШКИЦИ, ПАПЕС, ТОНЮЦИЭМС, ЯВНЕ, РЫМЖЕНЦЫ, ЛАЗДУНЯНЫ, САРТЫНИКИ, МАРГИШКИ ятлă пысăк ялсем тата ЕЧИ, ПАПЕ ятлă чугун çул станцийĕсем.

ШАКЯЙ хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, 1-МĔШ ПРЖЕВОЗНИКИ, 2-МĔШ ПРЖЕВОЗНИКИ, ДИВАЙЦЕ, РОЦИШКИ, ЖУРЫ, ШИЛИНИКИ, БУТВИЛИШКИ, СЛОВИКИ, ШИЛГАЛЕ, РУКШНЕ ятлă ялсене туртса илнĕ.

Çурçĕр Трансильванире пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, ОРАДНА хулине, БОРГО хулине тата халăх пурăнакан ытти 80 пункта ытла тытса илнĕ, вăл шутра —МАГУРА, БЫРГЭЛУЙ-ЖОСЕНЬИ, КУШМА, ПЕТРЕШ, БИЛАК, ДИПША, САС-МАТЕ, БУЗА, ДЬЕКЕ, ПАЛАТКА, ГЭДЭЛИНУ, ФЕЙУРДЕНЫ, СУЧАГ, ДЖИЛЭУ ятлă пысăк ялсем тата РАДНА, НОДЬИЛЬВА, МЕГУРА, ТИХА, БИСТРИЦА-БЫРГЭЛУЙ, НАДЬ-ИДА, ЛЕКЕНЦЕ, САС-СЕНТ-ДЬЕРД, КЕЧЕД ятлă пысăк ялсем.

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем октябрĕн 12-мĕшĕнче, утлă çарпа танксем тăшмана çавăрса илмелли ăста маневр тунипе пула, Трансильванири администрацине хуçалăхăн пысăк центрĕ тата çул йĕрсен паха узелĕ пулса тăракан ОРАДЕА-МАРЕ (ГРОССВАРДЕЙН) хулине туртса илнĕ.

Венгрире ДЕБРЕЦЕН хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, КИШУЙСАЛЛИШ хулипе чугун çул узелне, КУНХЕДЬЕШ хулине пысăк чугун çул станцине, çавăн пекех тата ТИССАСЕНТИМРЕ, АБАДСАЛОК, ТИССАФЕЛЬДВАР, КУНСЕНТМАРТОН ятлă ялсене туртса илнĕ.

Венгерсен СЕГЕД хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем Югослави çĕрĕнче СУБОТИЦА хулипе пысăк чугун çул узелне тата ХОРГОШ хулипе чугун çул узелне туртса илнĕ.

БЕЛГРАД хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем, Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн чаçĕсемпе пĕрле кĕрешсе, СМЕДЕРЕВО хулине туртса илнĕ. Çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 60 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — КУСИЧИ, МАЙЛОВЕЦ, СРЕДНЕВО, ПАНКОВО, ДОЛЬНАЯ ЛИВАДИЦА, ПАЛАНКА, ГЛИБОВАЦ, НАТАЛИНЦИ, СВИЛАЙНАЦ ятлă пысăк ялсем тата ПАЛАНКА, ГЛИБОВАЦ ятлă чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çўренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Октябрĕн 11-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 98 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 26 самолетне персе ўкернĕ.

(Юлашки 2-мĕш страницăра).

Украина колхозникĕсем чĕнсе калани çине ĕçпе ответлер, государствăна тырă срокчен парса татар, Хĕрлĕ Çар фондне планран иртте рсе тырă парар!

ХĔРЛĔ ÇАР ФОНДНЕ—ТЫРĂ

КУКЕÇ, октябрĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса тата Хĕрлĕ Çарĕн фронтри çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, районри колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне планран иртте рсе тырă параççĕ.

Районри колхозсенчен илнĕ хыпарсем тăрăх, октябрĕн 11-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çар фондне малтан пĕлтернĕ пек 5700 пăт мар, 8.500 пăт тырă панă, октябрĕн 12-мĕшĕнче «Заготзерно» складне 1.500 пăт тырă леçнĕ.

Енер колхозсенчен Хĕрлĕ Çар фондне тата 2000 пăт пама кăмăл туни çинчен хыпар илтĕмĕр, вăл тырра паян пĕтĕмĕшпех леçсе пĕтеретпĕр.

В. КАРАУШЕВ.
ВКП(б) Шупашкар райкомĕн секретарĕ.

* * *

ИШЛЕЙ, октябрĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Шупашкар районĕнчи колхоз председателĕсен канашлăвĕ Хĕрлĕ Çар фондне планран иртте рсе тырă пама чĕнсе каланине кашни колхозрах хавхаланса кĕтсе илчĕç. Енерхи кун тĕлне «Парижская Коммуна» колхоз 120 пăт, «Красный воин» колхоз — 90 пăт, «Знамя победы» колхоз—120 пăт, «Гвардия» колхоз—90 пăт, «Ырашпулăх» колхоз—110 пăт, «Верный путь» колхоз—90 пăт, «Красный пахарь» колхоз—120 пăт, «Броневик» колхоз 70 пăт, «Пархикасси» колхоз—120 пăт, Сталин ячĕпе тăракан колхоз 100 пăт панă.

Районри колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне пурĕ 7000 пăт пама пулчĕç. Çак тырра паян пĕтĕмпех государство склачĕсене хыватпăр.

И. ПИДУГАНОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

ВАРНАР, октябрĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Пирĕн районри колхозсем обязательствăсем тăрăх государствăна тырă парса татрĕç. Чаплă çĕнтерўсем туса пыракан Хĕрлĕ Çара ытларах пулăшас кăмăлпа, пирĕн колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне 10.000 пăт тырă планран иртте рсе хывма кăмăл турĕç. Паянхи кун тĕлне государство склачĕсене 4.200 пăт тырă хывнă та ĕнтĕ.

Кольцовкăри Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан колхоз — 240 пăт, «Самолет» колхоз — 240 пăт, «Гигант» колхоз — 180 пăт, Чапаев ячĕпе тăракан колхоз — 210 пăт, Ленин ячĕпе тăракан колхоз — 210 пăт, «Победа» колхоз — 300 пăт тырă Хĕрлĕ Çар фондне хыврĕç. Çак тава тивĕçлĕ ĕç районри ытти колхозсенче те пысăк çĕкленўпе пырать.

П. ОСИПОВ,
Вăрнар райисполкомĕн председателĕ.

РЕСПУБЛИКĂРИ РАЙОНСЕНЧЕ АВАН ÇАПАС ĔÇ ОКТЯБРĔН 10-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА
(Процентпа)

РАЙОНСЕМ	Аван çапнă	Вăрлăхлăх акнă куракăсене çапса пĕтĕрни
1. Элĕк	90,6	63,5
2. Чурачĕк	90,0	48,3
3. Етĕрне	89,5	15,5
4. Тăвай	87,5	15,0
5. Шупашкар	85,1	72,0
6. Вăрнар	83,2	9,8
7. Шăхасан	83,0	—
8. Сĕнтĕр	82,9	79,8
9. Комсомольски	82,9	19,5
10. Хĕрлĕ Чутай	81,7	32,5
11. Çĕрпў	81,3	81,4
12. Муркаш	81,3	70,9
13. Шăмăршă	81,1	47,6
14. Ишлей	81,0	21,0
15. Калинино	79,5	19,1
16. Пăрачкав	78,7	—
17. Куславкка	78,6	40,9
18. Вăрмар	75,6	9,8
19. Елчĕк	75,2	52,1
20. Красноармейски	74,3	63,3
21. Первомайски	74,2	—
22. Сĕнтĕрвăрри	73,5	75,5
23. Советски	73,0	16,7
24. Çĕмĕрле	72,3	—
25. Йĕпреç	72,2	—
26. Чкаловски	72,1	23,8
27. Канаш	70,3	15,7
28. Улатăр	68,3	26,0
29. Октябрьски	67,4	37,1
30. Кувакино	65,1	—
31. Шупашкар хули	93,5	—
Пĕтĕмпе	76,6	32,9

Хĕрлĕ Çар фондне—8.000 пăт тырă

СЕНТЕР, октябрĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозниксемпе колхозницăсем Шупашкар районĕнчи колхозниксем чĕнсе каланине ырларĕç. Çак чĕнĕвĕ сўтсе-явас май октябрĕн 12-мĕшĕнче колхоз председателĕсен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу участникĕсем, пурте пĕр кăмăллă пулса, Хĕрлĕ Çар фондне планран иртте рсе 8.000 пăт тырă пама тата çав тырра октябрĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр хатĕрлев пунктне леçсе пама пулчĕç.

Шупашкар районĕнчи колхозниксен чĕнĕвне халь колхозсенче сўтсе-яваççĕ. Пушкăрт, Тепте ялсовечĕсенче пухусем пулса иртнĕ. Пушкăрт ялсоветĕнчи «Новый путь» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар фондне 60 центнер тырă пама пулнă. Октябрĕн 13-мĕшĕнче «Заря» колхоз 27 центнер, «Ударник» колхоз 15 центнер, «13 лет РККА» колхоз 10 центнер, «Родина» колхоз 10 центнер тырă хатĕрлев пунктне леçнĕ те ĕнтĕ.

Тепте ялсоветĕнчи «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз членĕсем 30 центнер пама йышăнса 27 центнерне леçнĕ.

С. СОКОЛОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Сўс-кантăр хатĕрлес ĕçе хакламаççĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ, октябрĕн 12-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсенче кантăр татса çапасси тата шыва хутасси çаплипех юлса пырать. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ сентябрĕн 23-мĕшĕнчех, район кантăр татса тирпейлес тĕлĕшпе юлса пынине кăтартса, çĕрĕç пайĕн заведующине Малышев юлташа хыттăн асăрхаттарнăччĕ. Анчах та районăн çаврăнăçусăр руководителĕсем çакăнтан вывод туман, вĕсем çак ĕçе вăхăтра йĕркелеме колхозниксемпе колхозницăсен анлă массине мобилизацилемен.

Кунта малта пыракан «Заветы Ильича», «Трактор», «Комбайн» тата «Правда» колхозсем кăна кантăра татса 53 гектар çинчи кантăра тирпейлесе шыва хутма ĕлкĕрнĕ. Ку вăл 20 процента яхăн кăна пулать. Ытти колхозсенче кантăра çапман тата шыва та хутман. Татнă кантăр уйра купара е итемре сапаланса выртать. Вăл кăна мар. «Культура» колхозра 8 гектар, Красин ячĕпе тăракан колхозра 6 гектар çинчи кантăра çак вăхăта çитсе те татса пĕтермен. Тахçанах пулса çитĕннĕ кантăр пăсăлать, унăн паха вăрлăхĕ тăкăнса пĕтет.

Çаксене пула ĕнтĕ районра кантăр вăрлăхĕ тата сўс-кантăр хатĕрлесси юлса пырать. Тўррипе каласан, кунта çак ĕçе пуçăнман та тата ун пирки никам та нимĕн те тумасть. Паянхи кун тĕлне кунта пурĕ те 12 центнер кантăр вăрлăхĕ тата 7 центнер сўс хатĕрленĕ. Районри нумай колхозсем иртнĕ çулсемшĕн те государствăна сўс-кантăр парса татман.

Çапах та район руководителĕсем ку ĕçе иккĕмĕш, виççĕмĕш черетри ĕç тесе, кая хăвараççĕ. Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕ Кадыков юлташ сўс-кантăр хатĕрлессипе пачах ĕçлемест. ВКП(б) райкомĕ те çак ĕç çине тивĕçлипе пăхмасть-ха. Сентябрĕн 16-мĕшĕнче кунта «Заготленăн» районри конторин управляющийĕ пулма Митьков юлташа уйăрнă. Октябрь уйăхĕнче вара ăна ĕçрен кăларса колхоза ĕçлеме янă.

Н. МАЛЬЦЕВ,
«Заготлен» конторин управляющийĕ.

Комсомолецсем кĕрхи çĕртмере

ОКТЯБРЬСКОЕ, октябрĕн 12-мĕшĕ. (Телефонпа). Саратов облаçĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем чĕнсе каланине сўтсе-явнă хыççăн колхозсенче кĕрхи çĕртме тăвас ĕç чылай лайăхланчĕ. Ку ĕçре уйрăмах комсомолецсемпе çамрăксем пикенсе ĕçлеççĕ.

— Кĕрхи çĕртме туни — тырпул тухăçĕшĕн кĕрешни, — тесе, вĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе районĕпе пурĕ 122 комсомолец хутшăннă. «Красная Чувашия» колхоз кĕрхи çĕртме туса пĕтерчĕ. Кунта 7 комсомолец ĕçленĕ, вĕсем кашни кунах ĕç нормине иртте рсе тултарса пынă. Петровпа Кузьмин комсомолецсем кунне 1,25—1,30 гектар сухаланă. «Комсомолец» колхозра Яковлев, «Коммунизм» колхозра Козловский комсомолецсем кунне 1,5-шер гектар сухалаççĕ. «Коминтерн», «Советская деревня», Сĕньялти «Коммунизм» колхозсем çак кунсенче кĕрхи çĕртме туса пĕтереççĕ.

С. РУМЯНЦЕВ.

Кўршĕсем пулăшасса кĕтсе ларакансем

СЕНТЕР, октябрĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Янăм ялсоветĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз кăçал пур ĕçре те чăтма çук кая юлса пырать. Кунта кĕлтесене капана хывса пĕтермен, паянхи кун тĕлне те çĕр гектар çинчи кĕлте уйра суратсенче ларать. Авăн çапасси те юлса пырать. Авăна кăнтăрла çеç çапаççĕ, ĕç дисциплини ытла та начар. Ĕçе кам хăçан тухас тет—тухать, тухмасан та никам та нимĕн те каламасть. Çĕрулми 22 гектар лартнă, ăна кăларма çак кунсенче кăна тытăннă. Кĕрхи çĕртме çĕрĕç пайĕн планĕ тăрăх 120 гектар тумалла, ку ĕçе тума шухăшламаççĕ те.

Выльăх-чĕрлĕх фермисен çурчĕсене, витесене юсама тытăнман. Колхозăн 130 тонна силос хывмалла пулнă, çак вăхăта çитсе пĕр тонна та хывман.

Саратов облаçĕнчи Калинин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн членĕсем Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва организацилеме чĕнсе каланине кунта колхозниксене ăнлантарса паман.

Киров ячĕпе тăракан колхоз пур ĕçре те юлса пынине кура, кўршĕри «Новая жизнь» колхоз ăна пулăшма 10 лаша тата çынсем ячĕ. «Быстрый» колхоз кĕлте турттарса капана хывас ĕçре пулăшма 5 лаша ярса пачĕ.

Анчах та, Киров ячĕпе тăракан колхоз председателĕн Анисимов юлташăн кўршĕри колхозсем килсе ĕçлесе парасса кăна кĕтсе лармалла мар, колхозра Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ямалла, ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлеме мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене мобилизацилемелле.

С. МОИСЕЕВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ОКТЯБРĔН 12-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

Рига хули енче пирĕн çарсем çĕрле тăшмана сасартăк пырса çапнă. [illegible] Рига [illegible] Совет чаçĕсем [illegible] Псков [illegible] Рига хулинчен 9 километр [illegible] Рига патне çывхарса пыраççĕ.

Клайпеда (Мемель) хулинчен çурçĕтерехре пирĕн çарсем Либава хулинчен [illegible] Балтика тинĕсĕ хĕррине тухнă. [illegible]

Çурçĕр Трансильванире пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă. [illegible]

Украинăри 2-мĕш фронт çарĕсем [illegible] Ораде-Маре [illegible] Дебрецен [illegible] Сегед [illegible]

Çурçĕр флочĕн самолечĕсем Варде тата Бу[illegible] [illegible]

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ [illegible]

Хурт-хăмăра начар пăхаççĕ

[illegible]

И. ЕФРЕМОВ.

Политпросвет учрежденийĕсен ĕçне тĕплĕн пăхса тухар

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннă тăрăх, октябрĕн 15-мĕшĕпе 30-мĕшĕ хушшинче республикăри вулав çурчĕсен, ялсенчи клубсен, районсенчи культура çурчĕсемпе библиотекăсен ĕçне пăхса тухаççĕ. Çав ĕçе ертсе пыма ВКП(б) Обкомĕ парти райкомĕсене кашни районрах ВКП(б) райкомĕпе ВЛКСМ райкомĕн, райисполкомăн, районри çутĕç пайĕн, райхаçат редакцийĕпе профсоюз организацийĕсен представителĕсенчен комисси тума хушнă. Комиссин председателĕ парти райкомĕн секретарĕ пулма тивĕçлĕ.

Çакă вăл политика тĕлĕшĕнчен пысăк вырăн йышăнакан ĕç пулса тăрать. Çав ĕçе туса ирттересси çине ялти партипе комсомол организацийĕсен, вырăнти советсен тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Политпросвет учрежденийĕсен ĕçне пăхса тухнă çĕре партипе совет, комсомол активне тата районри интеллигенцие явăçтармалла.

ВКП(б) Центральный Комитечĕ кăçалхи июль уйăхĕнче хăйĕн ятарласа йышăннă постановленийĕнче пирĕн республикăри культурăпа çутĕç учрежденийĕсем çителĕксĕр ĕçленине кăтартса пачĕ. Çавăн хыççăн чылай районсенче культурăпа çутĕç учрежденийĕсем хăйсен ĕçне лайăхлатни палăрчĕ, вĕсен ĕçĕ çине парти организацийĕсем те ытларах çавăрăнса пăхма пуçларĕç. Анчах çапах та, ВКП(б) Центральный Комитечĕпе парти Обкомĕ çирĕппĕн кăтартса панă пулин те, республикăра çителĕксĕр ĕçлекен вулав çурчĕсемпе библиотекăсем сахал мар-ха, вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем хут çинче кăна шутланса тăраççĕ.

Ялсенчи политпросвет учрежденийĕсен ĕçне пăхса тухнă вăхăтра ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннă решенире палăртнă çитменлĕхсене пурне те пĕтермелле, районри кашни культура çуртне, вулав çуртне, библиотекăна лайăх ĕçлекен тумалла, вĕсене ертсе пыма политика тĕлĕшĕнчен лайăх вĕренсе хатĕрленнĕ тата хăйсен ĕçне юратакан çынсене уйăрса лартмалла, кашни клуба, вулав çуртне, библиотекăна шалтан та, тултан та тĕплĕн юсаса йĕркелемелле, вĕсем валли литература, хаçат-журналсем, шашкăсемпе шахмăтсем, музыка инструменчĕсем, хĕлле ĕçлеме вутă тата краççин çителĕклĕ таран тупса памалла. Политпросвет учрежденийĕсен ĕçне пăхса тухакан çынсен çитменлĕхсене палăртнипе кăна иртсе каймалла мар, çав учрежденисен ĕçне лайăхлатса йĕркелеме те çине тăрсах пулăшмалла.

Клубсемпе вулав çурчĕсем çумĕнчи кружоксен ĕçне чĕртсе вăйлатасси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхас пулать. Мĕнпур колхозсенче хор, драма тата музыка кружокĕсене çĕнĕрен пухса йĕркелемелле. Пирĕн республика хăй 25 çул тултарнине кĕтсе илме хатĕрленет. Çавăн çинчен манмалла мар. Пирĕн çав уява халăх пултарулăхне татах та ытларах вăйлатнипе кĕтсе илмелле.

Политпросвет учрежденийĕсен ĕçне тĕплĕн те йĕркеллĕн пăхса тухасси çав ĕç çине парти райкомĕсем, районри çутĕç пайĕсем, комсомол райкомĕсем мĕнле пăхнинчен килет. Вĕсем политпросвет учрежденийĕсен ĕçне большевикла ертсе пыма тивĕçлĕ. Клубсемпе вулав çурчĕсене ялти культурăллă-массăллă ĕçĕн вучахĕсем туса хурасси партипе комсомол организацийĕсен тата çутĕç органĕсен хисеплĕ задачи пулса тăрать.

Ялсенчи политпросвет учрежденийĕсен ĕçне пăхса тухассине тĕплĕн те йĕркеллĕн туса ирттерер.

Район центрĕнчи культура çурчĕ

Пилĕк-ултă уйăх каярах Октябрьски район центрĕнчи культура çурчĕ питĕрĕнсе кăна тăнă. Район центрĕнчи çамрăксем çĕнĕ кинокартинăсемпе спектакльсем курма пултарайман, концертсем, лекцисем итлеймен. Вĕсем вăхăта ăçта май килчĕ унта çӳресе е килĕсенче ларса ирттернĕ.

Вăрçă кунĕсенче ялти ĕççыннисен культурăпа политика тĕлĕшĕнчи ыйтăвĕсем нихăçанхи пек мар ӳсрĕç. Пуринчен ытларах ĕççыннисем Хĕрлĕ Çарăн тата хамăр союзниксен çĕнтерĕвĕсем çинчен, Совет Союзĕпе тĕнчери лару-тăру çинчен пĕлесшĕн. Каннă вăхăтсенче спектакль е концерт курасшăн, çĕнĕ хаçатсемпе кĕнекесем вуласшăн.

Ĕççыннисем ыйтнине тивĕçтерес тесе, ВКП(б) Октябрьски райкомĕ çине тăрса ĕçе тытăннă. Çак ыйтăва хăйĕн бюровĕнче сӳтсе-явнă. Çавăн хыççăн вара халиччен пушах ларнă район центрĕнчи культура çуртне чăн-чăнах культура сăнĕ кĕме пуçланă.

Çак çуртăн директорĕ пулса район центрĕнчи вăтам шкулăн учителĕ А. Васильев юлташ ĕçлет. Вăл хăй те хастарлă çамрăк, искусствăна юратакан çын. Отечественнăй аслă вăрçа кайиччен вăл артист пулса ĕçленĕ. Çавăнпа та вăл çак ĕçе пикенсех тытăннă. Вăл ĕçри йывăрлăхсем умĕнче чарăнса тăман.

Ĕçе пуçарса яма чи малтанах çителĕклĕ таран укçа-тенкĕ кирлĕ пулнă. Ку ыйтăва вĕсем Çутĕç Халăх Комиссариачĕ урлă пурнăçланă. Кун хыççăн вара культура çуртне тĕплĕн юсаса тасатас ĕç пуçланнă. Кăмакасене юсаса сăрпа сăрланă. Художник çумпуçсен портречĕсене (пĕтĕмпе 11 портрет) ӳкернĕ. Васильев юлташ хăех мĕнпур стенасене шуратнă, плакатсемпе лозунгсем çырса çакнă, чӳречесем валли шторăсем хатĕрлеме панă. Хуракасси промысла артелĕнче сĕтел-пукансем тутарнă. Часах çурта тивĕçлĕ сăн кĕнĕ. Унта çамрăксем çӳре пуçланă.

Культура çуртне пырсан, чи малтанах фойене кĕретĕн. Ăна йĕри-тавра йĕркеллĕн çакса тухнă тĕрлĕрен лозунгсемпе плакатсем, портретсем илемлетеççĕ. Унтах çĕнĕ хыпарсене пĕлме «Юлашки хыпарсен» хăми, хаçат витрини пур, карттăсем çакăнса тăраççĕ. Кунти йĕркелĕхе кура, пыракан çынсем чĕлĕм туртма тулалла тухаççĕ.

Фойерен сулахай енче—аслă зал. Кунта та çавăн пекех илемлĕхпе тирпейлĕх куçа савăнтарать. Капăр сценăн икĕ енче — Ленинпа Сталинăн пысăк портречĕсем. Стенасем çумĕнче хĕрлĕ материсем çине çырнă плакатсемпе лозунгсем. Залра 120 çын вырнаçмалăх хыçлă пукансем лартса тухнă.

Фойерен сылтăм енче — комсомол кабинечĕ. Ăна комсомол райкомĕн пуçарăвĕпе тунă. Кабинетра комсомол пурнăçĕпе унăн ĕçĕсем çинчен калакан выставка организациленĕ. Унта: комсомол пăхса ӳстернĕ Отечественнăй аслă вăрçă геройĕсем, Хĕрлĕ Çарăн полководецĕсем, Совет халăхĕн хăюллă хĕрĕсен — Наташа Ковшова, Мария Поливанова, Зоя Космодемьянская, Лиза Чайкина комсомолкăсен сăнĕсем. Ленинград фрончĕн геройĕсем Покрышев, Свитенко, Мыльников юлташсем пур. Кĕнеке витрининче активист Ленинпа Сталин комсомол çинчен каланисене, çĕнĕ художествăллă произведенисене, комсомол ĕçĕпе паллаштаракан материалсене тупса вулама пултарать. Çапла ĕнтĕ кабинет комсомолецсен политикăллă пĕлĕвне ӳстерсе пыма пулăшать.

Çак пӳлĕмпе юнашар — библиотека. Унăн заведующийĕ пулса комсомолка Р. Васильева юлташ ĕçлет. Библиотекăра 4000 кĕнеке ытла. Вулакансен хисепĕ 150 çынран иртет. Пуринчен ытларах кунта хаçат-журналсем вулама шкул ачисемпе учительсем, ялти çамрăксем тата агитаторсем çӳреççĕ. Кунсерен 15—20 çынтан кая мар пырать.

Çапла ĕнтĕ Октябрьскинче культурăллă-массăллă ĕçе пуринчен ытларах çак çурт урлă туса пыраççĕ. Культура çурчĕн ĕçне ертсе пыма унăн совечĕ пур. Культура çурчĕ çумĕнче драма кружокĕ (ăна А. Васильев юлташ ертсе пырать) тата хор кружокĕ (руководителĕ—учительница Зарубина) ĕçлеççĕ. Драма кружокĕ нумаях пулмасть Кăлканăн «Анисса» пьесине лартса панă. Халĕ «Ялта», «Нарспи», «Айдар» пьесăсене лартма хатĕрленеççĕ. Унсăр пуçне эрнере 4 хутчен кино кăтартаççĕ. Кино е спектакль пуçланас умĕн хальхи тапхăрти лару-тăру çинчен калаçусем ирттереççĕ. Кунсăр пуçне кашни уйăхрах пропагандистсемпе учительсен вăйĕпе хальхи тапхăрти лару-тăру тата умри задачăсем çинчен докладсем ирттерме палăртнă.

Справка паракан сĕтел ĕççыннисене тĕрлĕ законсене ăнлантарса парать, облигацисем çине вылявсем тухнине тĕрĕслет, колхозниксен ыйтăвĕсем çине ответлет.

Культура çурчĕ хĕл валли 50 кубометр вутă хатĕрленĕ, ăна колхозниксем турттарса параççĕ.

З. МИТРОФАНОВА.
(Хамăр корр.).

НЕФТЬ

(Куйбышев облаçĕнчен килнĕ çыру)

Эпир Кинель шывĕ хĕрринче, утă капанĕ айне туса хăварнă ӳплере ларатпăр. Ӳпле умĕнче кăвайт шатăртатса çунать. Пĕлтĕрхи хĕвелçаврăнăш тунисем çунса пĕтсен те пайтахчен пăхăр тĕслĕн курăнса йăлкăшса выртаççĕ. Кĕрхи çил Кинель тăвĕ çинчи типпĕ кăлкана чăштăртаттарать, çеçенхирсенчен кăмăла хускатакан тутлă шăршăсем илсе килет. Вут-çулăм вăйлăраххăн çĕкленнĕ вăхăтра ана çинче шултăра арбузсем курăнаççĕ.

Нефтяниксен пахчисене хураллакан Кирилл Иванович Арланов, Кириле мучи, хăй ĕлĕк-авал кунти нефтьпе мĕнле паллашни çинчен каласа парать:

— Пĕр 45 çул каялла эпĕ алла вутпа пĕçертнĕччĕ, — тесе пуçласа ярать вăл, кĕл ăшне кавăн чавса хурса. — Ман алă еннесе кайма пуçларĕ. Çĕпрепе те çыхса пăхрăм, тăм та сĕртĕм... Сар çу та, шăратнă сысна çăвĕ те, хур çăвĕ те, йывăç çăвĕ те пулăшмарĕ. Юлашки чăхха илсе кайса, Пăрăслантан пĕр кашăк пек черинил илсе килсе сĕртĕм, вăл та усса пымарĕ, писăре култарни çеç пулчĕ. Мĕн тăвăн, 5 çул хушши тарçăра ĕçлесе лаша илме пуçтарнă 12 манит укçа пĕр уйăх хушшинче шăнкăрт çеç тухса ӳкрĕ.

— Эсĕ те, Кукăр Ехвин пек, чăлах çын пулса юлатăн пуль ĕнтĕ,—тесе саспах макăрать карчăк. (Ун чухне карчăк пулайман та-ха ĕнтĕ, — тет Кириле мучи кулкаласа).

Вунă пуслăх икĕ пăхăр укçа хырса çисе янă хыççăн алтуни ӳт илме пуçланăччĕ, сасартăк шыçса арасланчĕ карĕ. Аптăранă кăвакал кутăн чăмнă тенĕ пек, тухса утрăм хайхискер юмăç патне.

— Сип пултăр, тĕп пултăр, тĕме вырăн яка пултăр. Тьфу! Тьфу! Тьфу! — тесе сурать юмăç карчăкĕ. Тепре пырсан, малтан вĕрсе сурни пулăшманнине кура, ăна хирĕç каласа пăхать.

— Е пĕсмĕлле, çырлах. Суран çине суран пултăр. Мăкăль çине мăкăль тухтăр. Кӳп çине — кӳп! Яка вырăн—тĕме! Питĕ вырăн шăтăк пултăр...

Шăши тирĕпе, шыçă куракĕпе, эрешмен картипе, тăварланă хăярпа çыхнисем те пулăшман хыççăн алсăрах пулап пуль тенĕччĕ те, пĕр ырă çын тупăнчĕ.

— Санăн аллуна çĕр сĕткенĕпе çыхас пулать, — терĕ вăл мана.

— Аçта шыраса тупмалла-ши вăл сĕткене?—тетĕп.

— Çĕньял улăхне кай, унта хăвах курăн,—тет.

— Висĕ кунлăх çăкăр чикрĕм те, ав çав улăха килсе çитрĕм,—тесе старик Похвистнĕ станцинчен хĕвелтухăçнерех курăнакан çутăсем çинелле тĕллесе кăтартрĕ. — Çĕрле хальхи пекех. Инçех те мар чăвашла калаçнисем, юрланисем илтĕнеççĕ. Анчах манăн ывăннипе тата суран ыратнипе пĕр утăм та тăвас килмест. Çавăнтах пĕр шыв кӳленчĕкĕ хĕррине пиншака хывса пăрахрăм та вут пек çунакан алла шыва чиксе çывăрма выртрăм. Ирхине тăрсан пăхап та—хам куçăма хам ĕненместĕп: ман алă чип чипер: шыççи те чакнă, ыратма та чарăннă. Шивĕ татах та хытăрах тĕлĕнтерчĕ вара: такам çу тăкса янă пек, кӳленчĕк талккишĕпех çу çаврашкисем юхса çӳреççĕ. Аяккарах кайса пăхатăп — ытти кӳленчĕксем те çавнашкалах... Вăл япала нефть иккенне каярахпа вĕреннĕ çынсем каласан тин пĕлтĕм эпĕ.

— Алла çапла юсанă хыççăн «тухтăра» тухрăм вĕт, — тесе кулать Кириле мучи. —Тĕрлĕ инкек-синкексем пулсан, таврари чăвашсем сипленме тӳрех ман пата чупса пыратчĕç.

— Пулăшатчĕ-и вара? — тесе ыйтатăп эпĕ.

— Самаях пулăшатчĕ, — тет старик. — Мĕншĕн тесен вăл çĕртен тухнă япала, çĕр сĕткенĕ.

Анчах алли мĕнле юсаннине Кириле мучи хăй те пĕлмест: те шыв пулăшнă, те шыври тĕрлĕ минералсем...

Похвистнĕ районĕнче тата Бугуруслан таврашĕнче нефть пуррине иртнĕ ĕмĕрĕн варри тĕлнеллех пĕлнĕ. Чи малтан ăна Çĕпĕр урлă иртекен аслă чугун çула хывнă инженерсем палăртнă. Анчах кăларасса Отечественнăй аслă вăрçă тапрансан тин кăларма пуçланă.

Кунти çĕршывсем ирĕк те хитре. Пĕр ялтан тепĕр яла çитме 10—15 çухрăм утас пулать. Унта та кунта кăлканлă тусем, аслă шыв-шурсем, улăхсем сарăлса выртаççĕ. Çурхи ирсенче вара шыв таппинче кайăк-хурсем какалани илтĕнет.

Ялсем пысăк. Хăшпĕрисем вĕсенчен 7—8 километр тăршшĕ сарăлса выртаççĕ.

Похвистнĕ районĕнчи чăваш ялĕсем — Кĕçĕн Ӳпреел, Патаккасси, Кивьял, Эверккел тата ытти те — шăп кăна «Кинельнефть» промыслисен районне кĕреççĕ. Çĕньял улăхĕн талккишĕпех, 40—50 тăваткал километрлă çĕр лаптăкĕнче, Кинель шывĕн тăрăхĕнче, Бугуруслан таврашĕнче —пур çĕрте те нефть. Хăшпĕр çĕрте вышкăсем пахчасенче, çĕрулми йăранĕсем хушшинче те курăнса лараççĕ.

Баку, Грозный, Майкоп хулисенчен килнĕ чаплă нефтяниксемпе пĕрлех кунта чăваш рабочийĕсем те ĕçлеççĕ, куллен кунах фронтпа халăх хуçалăхне пулăшса тăраççĕ.

«Кинельнефть» трестне, тĕпрен илсен, пурĕ те иртнĕ çулăн пуçламăшĕнче кăна ĕçе янă. Анчах çапах та вăл çав кĕске вăхăт хушшинчех «Иккĕмĕш Баку» системине кĕрекен трестсен малти вырăнĕнче тăрать. Нефть кăлармалли сийсем çиелте пулни тата юнашарах чугун çул иртни «Кинельнефть» промыслисен ĕçне малашне темиçе хут ӳстерсе яма май параççĕ.

Нефтсĕр пуçне Похвистнĕ районĕнче газ сийĕсем те нумай тупса палăртнă. Инженерсем каланă тăрăх, çитес ик-виçĕ çул хушшинчех Куйбышев хулинчи пур предприятисем те çав газсен вăйĕпе ĕçлеме пултараççĕ.

Районта тăвар кăлармалли вырăнсем те, пăхăр руди те пур.

Кĕрхи тĕттĕм каçсенче Похвистнĕ районĕнчи чăваш ялĕсем çинче çутă ялкăшса тăрать. Нефть промыслисем, шахтăсем, çĕнĕ заводсем кунне-çĕрне пĕлмесĕр фронт валли ĕçлеççĕ.

— Эх, кăшт çамрăкрах пулас пулсан,— тет Кириле мучи, çутăсем еннелле тимсĕлсе пăхса. — Ман вырăн та арбуз ани çинче пулас çук та вĕт!.. Кам шухăшланă-ха ĕлĕк пирĕн ялсем айĕнче çавнашкал пуянлăхсем выртнине.

Хветĕр УЯР.

Совет Союзĕ тăрăх

ШКУЛТА ВĔРЕНЕКЕНСЕН НАУКĂЛЛĂ-ТЕХНИКĂЛЛĂ КОНФЕРЕНЦИЙĔ

Çамрăк техниксен Н. М. Шверник ячĕпе тăракан центральнăй станцийĕ шкулта вĕренекенсен наукăллă-техникăллă иккĕмĕш заочнăй конференцине ирттерет. Çав конференцие аслă классенче вĕренекенсем хутшăнма пултараççĕ. Вĕсен кашнийĕн наукăпа техника тĕлĕшпе хăйне интереслентерекен пĕр-пĕр темăпа доклад хатĕрлемелле.

Çуркуннехи каникул вăхăтĕнче çамрăк техниксен станцийĕсем тата пионерсен çурчĕсем хуласенчи е районсенчи наукăллă-техникăллă конференцисем пухса ирттереççĕ, çав конференцисенче вара шкулсенче суйласа илнĕ докладсене итлеççĕ. Наука тĕлĕшпе ĕçлекен авторитетлă работниксем тата специалистсем çав докладсем çинчен хăйсен шухăшĕсене çырса параççĕ. Вĕренекенсен чи лайăх ĕçĕсемшĕн премисем параççĕ. (ТАСС).

ХĔÇПĂШАЛ ТУСА КĂЛАРАКАНСЕН ÇИТĔНӲĔСЕМ

Хĕçпăшал наркомачĕн предприятийĕсем сентябрь уйăхĕнче çĕнĕ çитĕнӳ тунă, вĕсем çапăçу продукцийĕ туса кăларас тĕлĕшпе уйăхри тата кварталти плансене ирттерсе тултарнă. Артиллери хĕçпăшалĕ туса кăларакан пур предприятисем те уйăхри программăна ирттерсе тултарнă. Социализмлă Ĕç Геройĕсем Елян, Гонор, Быховский юлташсем директорсем пулса ĕçлекен заводсем уйрăмах лайăх ĕçленĕ.

Стрелок хĕçпăшалĕ туса кăларакан темиçе завод тата патрон завочĕсем чылайĕшĕ, çавăн пекех тата оптика завочĕсем пурте сентябрьти плана ирттерсе тултарнă. (ТАСС).

МЕТАЛЛУРГСЕМ ÇĔНĔРЕН НИКИТОВКА ДОЛОМИТНЕ ИЛМЕ ПУÇЛАÇÇĔ

Никитовкăри (Донбасс) доломит комбиначĕ вăрçăччен Совет Союзĕнче хура металлургие çунман материал—доломит парса тăракан пĕртен пĕр предприяти пулнă. Нимĕç захватчикĕсем çав комбинатăн завочĕсемпе фабрикисене ишсе хăварнă, оборудованин пĕр пайне Германие илсе кайнă. Халĕ комбинат металлургсене çĕнĕрен лайăх йышши доломит туса пама пуçланă. Никитовецсем 9 уйăхри программăна 102,5 процент тултарнă.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртура илнĕ обязательствăсене пурнăçласа, рабочисемпе специалистсем Совет Союзĕнчи çаврăнса тăракан пĕрремĕш кăмакана хута яма хатĕрленеççĕ. Октябрь уявĕ 27 çул тултарнă тĕле çав кăмака пĕрремĕш хут продукци туса кăларать. (ТАСС).

Болгари союзлă вiçĕ правительствăн малтанхи условийĕсене йышăннă

Болгари правительстви Совет Союзĕн, Великобританин тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительствисенчен перемири тума ыйтнă пирки çав союзлă виçĕ правительство октябрĕн 11-мĕшĕнче Болгари правительствине çапла пĕлтернĕ:

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн, Пĕрлешӳллĕ Королевствăн тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительствисем, Болгари правительстви перемири тума ыйтнине пăхса тухса, çапла йышăнчĕç: перемири тăвасси çинчен калаçас тесен, малтан Болгари правительствин Болгарин мĕнпур çарĕсене тата мĕнпур чиновникĕсене Грецине Югослави çĕрĕнчен каялла куçарса кайма сăмах памалла. Вĕсене халех куçарма тытăнмалла та çак кунтан пуçласа 15 кун хушшинче куçарса пĕтермелле. Вĕсене куçарнине тĕрĕслесе тăма союзлă виçĕ правительство Болгарие хăйсен представителĕсене ярĕç, çав представительсем Союзниксен Пĕрлешӳллĕ Миссийĕ вырăнне ĕçлĕç, çав Миссин председателĕ Совет представителĕ пулĕ.

Болгари правительстви союзлă правительствăсен çак условине йышăннă. (ТАСС).

Союзлă виçĕ правительствăн малтанхи условийĕсем пирки Болгари правительстви панă ответ

Совет Союзĕн, Пĕрлешӳллĕ Королевствăн тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен октябрĕн 11-мĕшĕнче панă малтанхи условийĕсене Болгари правительстви йышăнни çинчен пĕлтернĕччĕ.

Болгари правительствин октябрĕн 11-мĕшĕнчех Болгарири Совет çарĕсен Командующине Ф. И. Толбухин Маршала панă ответĕнче çапла каланă:

«Министрсен Совечĕ ячĕпе сире çапла пĕлтеретĕп: союзлă правительствăсен Сирĕн 1855 номерлĕ çырăвăрта кăтартнă решенине Болгари правительстви пĕтĕмпех пурнăçлама йышăнать.

Кунта çакна хушса каламалла: Болгари çарĕсене, Министрсен Совечĕ йышăннă тăрăх, Греци çĕрĕнчен ĕнерех, октябрĕн 10-мĕшĕнчех, куçарса килме тытăннă. Çав решени çинчен эпĕ Сире çĕркаçах çырса пĕлтернĕччĕ. Чиновниксене унтан куçарса килес ĕçе тата администрациллĕ влаçа вырăнти халăх аллине парас ĕçе нумай маларах пуçланнăччĕ, халĕ ăна туса пĕтернĕ ĕнтĕ.

Çав çара тата чиновниксене каялла куçарса килнине Союзлă Правительствăсен Çар Миссийĕ тĕрĕслесе тишкĕрсе тăма пултартăр тесе, Болгарин граждăнла влаçĕсемпе çар влаçĕсем ăна пур майпа та пулăшĕç. Министрсен Совечĕн Председателĕ Кимон Георгиев». (ТАСС).

Мускава Польша Халăх Совечĕн Председателĕ Б. Берут господин, Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕн Председателĕ Э. Осубка-Моравский господин тата Польша çарĕсен Главнокомандующийĕ М. Роля-Жимерский генерал-полковник килнĕ

Октябрĕн 11-мĕшĕнче Мускава Польша Халăх Совечĕн Председателĕ Б. Берут господин, Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕн Председателĕ Э. Осубка-Моравский господин тата Польша çарĕсен Главнокомандующийĕ М. Роля-Жимерский генерал-полковник килнĕ. Мускав аэродромĕнче вĕсене СССР Ют Çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский, СССР Наркоминделĕн 4-мĕш Европа отделĕн заведующийĕ В. А. Зорин тата Оборона Халăх Комиссариачĕн Тулашри çыхăнусен отделĕн начальникĕ М. П. Кутузов генерал-майор, çавăн пекех тата Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕн Совет правительстви çумĕнчи представителĕн ĕçĕсене туса тăраканĕ Ендрыховский господин кĕтсе илнĕ. (ТАСС).

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Леопольд каналĕ çинчи укрепление союзниксем ĕнер кунĕпех хăйсен аллинче çирĕп тытса тăнă. Союзниксен Шельда шывĕн кăнтăр çыранне антарнă десанчĕсем патне çĕнĕ вăйсем пырса çитнĕ.

Арнгем хулинчен хĕвеланăçнерехре тăшман Недеррейн шывĕн кăнтăр çыранĕнчи пĕр районран каялла чакнă.

Союзниксен Аахен хулине хупăрласа илнĕ çарĕсем, нимĕçсен çав хулари гарнизонĕ парăнма килĕшмен хыççăн, çĕнĕрен наступлени пуçласа янă. Аахен хулинчен çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем тăшманăн Варденбергри пехотипе танкĕсене хирĕç çапăçнă. Аахен хулинчен кăнтăрхĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем, тăшман вăйлă хирĕç тăнине пăхмасăрах, малалла куçса пынă.

Истребитель-бомбардировщиксем Рейн облаçĕнчи транспорт объекчĕсене пырапыра çапнă. Саарбрюкен районĕнчи шлюзсемпе чугун çул кĕперĕсем çине те бомбăсем пăрахнă. Йывăр бомбардировщиксем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, Кельнпа Кобленц районĕнчи вăрçă объекчĕсене пыра-пыра çапнă.

ЛОНДОН, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Италире 8-мĕш армин Англипе Инди чаçĕсем Болоньяпа Рим хушшинчи çултан кăнтăртарахри сăртлă вырăнта ăнăçлă кĕрешнĕ. Çанталăк начар тăнă пулин те, вĕсем тăшмана Гампеттола урлă çурçĕр-хĕвелтухăçнелле тата кăнтăр-хĕвеланăçнелле хăваласа янă. Тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, союзниксен чаçĕсем 2 миля малалла кайнă.

5-мĕш армин Бразили чаçĕсем Серчио шывĕн улăхĕ патнелле малалла кайнă. Вĕсен малта пыракан отрячĕсем хальхи вăхăтра Галликано тата Барга çывăхĕнче тăраççĕ.

Ĕнер йывăр бомбардировщиксем Вена районĕнчи промышленность объекчĕсене тапăннă. Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи авиацийĕ 1.700 вĕçеве яхăн тунă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, «Москито» йышши самолетсен соединенийĕ октябрĕн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Берлин çине бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: «Вĕçекен крепость» тата «Либерейтор» йышши самолетсен пысăк соединенийĕсем паян Бремен хулинчи авиаци заводне, çавăн пекех тата Çурçĕр-хĕвеланăç Германири ытти объектсене тапăннă.

ЛОНДОН, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтернĕ: паян «Галифакс» тата «Ланкастер» йышши самолетсем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, Рур облаçĕнчи синтетически горючи завочĕсене атакăланă.

ДЕПАРТАМЕНТСЕНЧИ ИРĔКЛĔХ КОМИТЕЧĔСЕН АВИНЬОНРА ПУЛНĂ КОНГРЕСĔ

ПАРИЖ, октябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Авиньонра 40 департаментри ирĕклĕх комитечĕсен конгресĕ пулса иртнĕ. Çав конгресра 300 делегат пулнă. Вĕсем çак организацисенчен пынă: «Фрон Насиональрен», «Нацие ирĕке кăларас юхăмран», социалистсен партийĕнчен, коммунистсен партийĕнчен, ĕç конфедерацийĕнчен тата христиан ĕççыннисен конфедерацийĕнчен.

Конгресс çакăн пек резолюци йышăннă: ирĕклĕх комитечĕсен вырăнсенче ассамблейăсене пухмалла, çав ассамблейăсем вырăнсенчи ирĕклĕх комитечĕсене çĕнĕрен суйласа ларттĕç, çавăнпа пĕр вăхăтрах департаментсенчи генеральнăй штатсене делегатсем суйлĕç. Çак штатсен вара департаментсенчи ирĕклĕх комитечĕсен составĕсене е çирĕплетмелле пулать, е çав комитетсене çĕнĕ членсем суйламалла пулать, çавăн пекех тата пĕтĕм Францири генеральнăй штата яма делегатсем уйăрса хумалла пулать.

Государство аппаратне тасатас тата сутăнчăксене наказани парас ĕçре васкаманшăн конгресс ятланă. Конгресс Виши «правительствин» тата Бордори капитулянтла правительствăн пур министрĕсене те арестлеме хушакан резолюци йышăннă.

ЛĂПКĂ ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

ВАШИНГТОН, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕрлешӳллĕ Штатсен Лăпкă океан çинчи флочĕн командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Америка çарĕсем Байракасерд утравĕ çине аннă. Çак утрав вăл Палау утравĕсен шутне кĕрет, вăл американецсем нумаях пулмасть йышăннă Гаракио утравĕнчен 7 миля çурçĕр-хĕвеланăçнерехре ларать.

Палау утравĕ çинче октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне японецсен мĕн пурĕ 12.470 çын вилнĕ.

НИМĔÇСЕМ ФИНСЕН ЯЛĔСЕНЕ ÇУНТАРАÇÇĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Финляндири радио панă хыпарсем тăрăх çапла пĕлтерет: çурçĕрелле чакса пыракан нимĕçсем финсен ялĕсене çунтараççĕ. Пушарсем Швеци чиккинчен курăнаççĕ, тет Рейтер агентстви хăйĕн пĕлтерĕвĕнче.

КĔСКЕН

* Англире икĕ çĕнĕ министерство тунă: граждăнла авиаци министерстви тата социальнăй обеспечени министерстви.

* Китайра çар повинноçĕ тĕлĕшпе ĕçлекен министерство тăваççĕ. Çав министерство çара мобилизацилес ĕçе ертсе пымалла.

* Кăçалхи çулла союзниксен авиацийĕ Вăтаçĕр тинĕсре тăшманăн 6 подводнăй лодкине шыва путарнă. Нумай подводнăй лодкисене сиенленĕ.

* Румынире çарта çынсене ӳт тĕлĕшпе сиен туса айăплас йĕркене пăрахăçа кăларнă. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

октябрĕн 13-мĕшĕнчен пуçласа
кунсеренех
«МАШЕНЬКА»
ятлă саслă, илемлĕ фильм
кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:
12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.
Билетсем малтанах илсе хума юрать.
Касса ирхине 10 сехетрех ĕçлеме пуçлать.

Часах
Совет Союз Геройĕн
Зоя Космодемьянскаян
пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен ӳкернĕ
«З О Я»
ятлă саслă, илемлĕ çĕнĕ фильм
кăтартма тытăнаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00741 Типографи № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.